**Чăваш тĕрри**

Мĕнле пуян чăваш тĕрри, –
Унта пин-пин çулсен йĕрри,
Унта хăват илет çĕнни,
Çынсем ĕмĕртенпе кĕтни.

Мĕнле хитре чăваш тĕрри,
Ун курăнмасть вĕçĕ-хĕрри.
Унта асамлă çăлкуçсем,
Илемлĕ çутă çăлтăрсем.

Мĕнле чипер чăваш тĕрри,
Унта маттур хĕрсен çĕрри.
Унта шур хурăнсен ĕшни,
Унта шур акăшсем вĕçни.

Мĕн авалтан чăваш тĕрри
Хĕвеллĕ, хӳхĕм çав тери.
Унта тăван ял-йыш сасси,
Хирти ака-суха касси.

Мĕнле хитре чăваш тĕрри, –
Унта çынсен хĕрӳ чĕри,
Яш-кĕрĕмсен паха парни,
Çĕршыв анне çунат сарни.

Мĕнле пуян чăваш тĕрри, –
Унта пин-пин çулсен йĕрри.

*Давыдов-Анатри, В. Чăваш тĕрри / В. Давыдов-Анатри // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 258.*